ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "АЧАЛЛĂ ÇЕМЬЕСЕНЕ ПАТШАЛĂХ ПУЛĂШĂВĔ ПАМАЛЛИ ХУШМА МЕРĂСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 2 ТАТА 8 СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕ памалли хушма мерăсем çинчен" 2012 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 1 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2014, 3 №; 2015, 12 №; 2016, 11 №; "Республика" хаçат, 2017, раштав уйăхĕн 27-мĕшĕ; 2020, çу уйăхĕн 7-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ, 0000000000000249 №; "Республика" хаçат, 2023, чӳк уйăхĕн 8-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 2 статьяра:

а) 1-мĕш пайăн пĕрремĕш абзацне çакăн пек çырса хурас:

"1. Пулăшу памалли хушма мерăсем илмелли право çуралнипе паракан Раççей Федерацийĕн гражданлăхне илнĕ ача (ачасем) çуралсан (усрава илсен), ача çуралнă кун тĕлне Раççей Федерацийĕн гражданлăхĕ пур, яланах е ытларах вăхăт Чăваш Республикин территорийĕнче пурăнакан çак çынсен пуçланать:";

ă) 2-мĕш пая "(тăван мар ашшĕ вĕсене усрава пама килĕшнине шута илмесĕр)," сăмахсем хыççăн "çуралнине пула Раççей Федерацийĕн гражданствине илмен ача (ачасем)," сăмахсем хушса хурас;

2) 8 статьян 1-мĕш пайĕн 2-мĕш тата 3-мĕш пункчĕсене çакăн пек çырса хурас:

"2) харпăр хăй вăйĕпе çурт-йĕр тума, юсаса çĕнетме, блоксенчен тĕксе тăвакан çурт-йĕре юсаса çĕнетме, çак ĕçсене гражданcем асăннă объектсене тăвакан е юсаса çĕнетекен организацине, çав шутра строительство подрячĕн килĕшĕвĕ тăрăх явăçтармасăр пурнăçлаççĕ, асăннă укçа-тенкĕне çак Саккунăн 2 статйин 4-мĕш, 4^1-мĕш тата 5-мĕш пайĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче çак Саккунăн 2 статйин 1-мĕш, 3–5-мĕш пайĕсенче асăннă çыннăн е çула çитмен ачан (ачасен) саккунлă представителĕн счечĕ çине куçарса парса;

3) çак Саккунăн 2 статйин 1-мĕш, 3–5-мĕш пайĕсенче асăннă çын е унăн упăшки (арăмĕ), е çула çитмен ачан (ачасен) саккунлă представителĕ çурт-йĕр тăвакан е юсаса çĕнетекен организацине, çав шутра строительство подрячĕн килĕшĕвĕ тăрăх явăçтармасăр харпăр хăй вăйĕпе туса лартнă, юсаса çĕнетнĕ пурăнмалли çурт тума, блоксенчен тĕксе тăвакан çурта юсаса çĕнетме кайнă тăкаксене çак Саккунăн 2 статйин 4-мĕш, 4^1-мĕш тата 5-мĕш пайĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче çак Саккунăн 2 статйин 1-мĕш, 3–5-мĕш пайĕсенче асăннă çыннăн е çула çитмен ачан (ачасен) саккунлă представителĕн банкри счечĕ çине çак Саккунăн 2 статйин 4-мĕш, 4^1-мĕш тата 5-мĕш пайĕсемпе пăхса хăварнă тĕслĕхсенче асăннă укçа-тенкĕне куçарса памалли майпа саплаштарма.".

2 статья

1. Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Чăваш Республикин "Ачаллă çемьесене патшалăх пулăшăвĕ памалли хушма мерăсем çинчен" 2012 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 1 №-лĕ саккунĕн (çак Саккунпа улшăнусем кĕртнĕ) 2 статйин 1-мĕш пайĕн пĕрремĕш абзацĕн тата 2-мĕш пайĕн положенийĕсен вăйĕ ача (ачасем) çуралнă (усрава илнĕ) кун тĕлне Раççей Федерацийĕн гражданлăхĕ пулман тата Донецк Халăх Республикин, Луганск Халăх Республикин, Запорожье областĕн тата Херсон областĕн территорийĕсенче асăннă республикăсемпе облаç-

сене Раççей Федерацине йышăннă тата Раççей Федерацийĕн йышĕнче çĕнĕ субъектсем – Донецк Халăх Республики, Луганск Халăх Республики, Запорожье облаçĕ тата Херсон облаçĕ йĕркеленнĕ кун тĕлне ялан пурăннă тата патшалăх пулăшăвĕ памалли хушма мерăсене илме правăллă Раççей Федерацийĕн гражданĕсене пырса тивмест.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хулин
2024 çулхи пуп̆уйăхĕн 29-мĕшĕ
10 №